## Парнелетĕп сана юрату юррине

Эп утатăп каçхи укăлча тĕлнелле,
Укăлча тĕлнелле, сирĕн кил еннелле.

Парнелетĕп сана юрату юррине,
Юрату юррине, чун-чĕрем парнине.

Чун савни, яриех уçса яр кантăкна,
Уçса яр кантăкна, кĕтсе ил эс мана.
Парнелетĕп сана юрату юррине,
Юрату юррине, чун-чĕрем парнине.

Эх, хитре çурхи каç – тӳпере çăлтăрсем.
Тӳпере çăлтăрсем, вăйăра çамрăксем.
Парнелетĕп сана юрату юррине,
Юрату юррине – чун-чĕрем парнине!

*Давыдов-Анатри, В. Парнелетĕп сана юрату юррине / В. Давыдов-Анатри // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 259.*